39-35

*ИВАН ИВНИК*

# ПИРĔН ТЕЛЕЙ

**Сăвăсемпе юрăсем**

ХАЛĂХ ТВОРЧЕСТВИ ÇУРЧĔ
ШУПАШКАР ◆ 1939

ИВАН ИВНИК

# ПИРĔН ТЕЛЕЙ

Сăвăсемпе юрăсем

ХАЛĂХ ТВОРЧЕСТВИ ÇУРЧĔ
ШУПАШКАР ◆ 1939

Редактор М. БЕЛОВ. Техредактор М. КОРОЛЕВ.

Послано в производство 1-VI-39. Подписано к печати 3|IX 39.
Уполномоченный Чувашглавлита № 1253.
Заказ № 572. Тираж 1075 экз. Об'ем 1 печатный лист

Чебоксары, типография „Чувашпромполиграф".

# УМСĂМАХ ВЫРĂННЕ

Иван Ивник—вулакансемшĕн—çĕнĕ ят мар. Вăл ята эпир хаçат-журналсенче, коллективлă сборниксенче тата уйрăм кĕнекесенче куратпăр. Вăл ята эпир радио тăрăх, концертсенче, ялти сценăсем çинчен илтетпĕр. Ивник—чăвашсен паллă поэчĕ.

Эпир кăларакан пĕчĕк кĕнеке поэтăн суйласа илнĕ сăввисемпе паллаштарать. Ăна эпир—аслă Сталин саманине, тăван çĕршыва тата унăн хĕрӳллĕ патриочĕсене чысласа çырнă сăвăсенчен йĕркелерĕмĕр. Вĕсемпе пĕрлех тĕнчери фашизма питлекен, фашизма хирĕç паттăрăн кĕрешме чĕнекен произведенисене те кĕртетпĕр.

Кĕнекери чылай сăвăсене („Хĕвелĕмĕр Сталин", „Юрă", „Летчиксен маршĕ", „Сыхлăх юрри", „Чапай") музыка çине хунă. Вĕсен нотисем хаçат-журналсенче пичетленсе тухнă. Ку енчен илсен—кĕнекене колхозсенчи, шкулсенчи хор кружокĕсене сĕнес килет. Вăл сăвăсемех, ыттисемпе пĕрле, художествăллă вечĕрсенче вуласа пама лайăх. Ку енчен вара—„Пирĕн телей" колхозсенчи ли-

тературăпа вулав кружокĕсемшĕн те вырăнлă пулмалла.

Çавăнпа та, художествăллă пултаруллăх кружокĕсем Ивник кĕнекине хапăл тусах йышăнĕç, тетпĕр.

**Редактор.**

## ХĔВЕЛĔМĔР СТАЛИН

Пурăнмашкăн пурнăç тулăх,
Юрлама та пит аван.
Советсен çĕршывĕ тăрăх
Кайтăр юрă,
Юрă кайтăр ян та ян!

Кам хĕн-хурлă пулнă ĕлĕк,
Камшăн пулнă хĕн-асап,—
Халь вĕсенĕн çут хĕвелĕ
Тухрĕ ăшшăн,
Ăшшăн тухрĕ çутатса.

Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Аслă тусăмăр, çулпуç,
Телее куратпăр халĕ
Ĕнтĕ эпĕр,
Епĕр ĕнтĕ куçран-куç.

Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Эс çутатăн ĕмĕрех.
Савăнать-çке пĕтĕм халăх,
Патăн ырлăх,
Ырлăх патăн эс пире.

Тавтапуç, юратнă Сталин,
Тавтапуç сана, мухтав!
Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Эсĕ—юрă,
Юрă—эсĕ, эс—ялав.

Пурăнмашкăн пурнăç тулăх,
Юрлама та пит аван.
Советсен çĕршывĕ тăрăх
Кайтăр юрă,
Юрă кайтăр ян та ян!

# ЮРĂ

Улма-чăпар ут эп утланам-и,
Инçе кăна çула эп тухам-и.
Эх, пырса кĕрем-и эп Мускава
Улма-чăпар утăма вылятса!

Мускав урамĕсем—пин урамĕ,
Улма-чăпар утпа эп пырам-и.
Сӳнми ĕмĕт пекех-çке ялтăрса
Кремль çинче çунаççĕ çăлтăрсем!

Хĕрлĕ площадь çинче, ай, мавзолей,
Пырайса тухами-и эп вăл тĕле.
Мавзолее кĕрсе эп курам-и,
Ленин атте çине эп пăхам-и.

Шухăшăмсем ман аслă Кремльре,
Унта пирĕн çулпуç—кăвар чĕре.
Сталин патне кĕрсе эп тухам-и,
Колхозсенчен салам эп калам-и.

Улма-чăпар ут эп утланам-и,
Инçе кăна çула эп тухам-и.
Эх, килсе кĕрем-и эп колхоза
Сталин янă чи ăшă салампа!

# ШАНЧӐКЛӐ ХУРАЛ

1

Ҫӑра тӗтрепе хупланать тавракурӑм,
Тӳлек каҫ шӑпӑрт сассӑр тӑрать.
Анчах пӗр тӑшман та ан ҫ каҫ чикӗ урлӑ,—
Пограничник ялан вахтӑра.

Пограничник курать,
Пограничник илтет—
Шанчӑклӑ пирӗн ҫӗршывӑн хуралӗ.

Вӗри-куҫ Кӑнтӑрта-и,
Е сивлек Ҫурҫӗрте—
Пирӗн ӗҫе вӑл ҫивчӗ хураллӗ.

2

Нихӑҫан тӗлӗрмест пирӗн мирлӗ застава,
Хураллать вӑл совет ҫӗршывне.
Нихӑҫан тӗксӗмленмӗ ҫӗршывӑн мухтавӗ,
Ҫутатать вӑл мӗнпур тӗнчене.

Пограничник курать,
Пограничник илтет—
Шанчăклă пирĕн çĕршывăн хуралĕ.
Çĕр çинче-и, шывра-и,
Сывлăшра-и, çӳлте—
Пирĕн ĕçе вăл çивчĕ хураллĕ.

3

Совет хуралне пулăшать пĕтĕм халăх:
Тăшмана вăл паллать пит аван.
Ак мĕншĕн эпир пултарулла та вăйлă,
Акă мĕншĕн—хăватлă ялан.

Пограничник курать,
Пограничник илтет—
Шанчăклă пирĕн çĕршывăн хуралĕ.
Кăнтăрла-и, çĕрле-и,
Е илемлĕ ирпе—
Пирĕн ĕçе вăл çивчĕ хураллĕ.

4

Çĕршывăм, татах та хăюллăн эс çитĕн,
Тĕреклен кунран-кун, çулран-çул.
Пире ют çĕр-шыв кирлĕ мар
хăть пĕр шит те,
Хамрăнне те пĕр шит парас çук.

Пограничник курать,
Пограничник илтет—
Шанчăклă лирĕн çĕршывăн хуралĕ.
Хулара-и, ялта-и,
Заводра, е хирте—
Пирĕн ĕçе вăл çивчĕ хураллĕ.

## ЛЕТЧИКСЕН МАРШĔ

Хуллен хĕрелет пĕлĕтсен ярапийĕ,
Çунать шурăмпуç манăçми илемпе.
Мухтавлă та аслă Совет çĕрĕ çийĕн
Вĕçет хурçă кайăк çак селĕм ирпе.

Паттăр, хастарлă
Пул, пилот!
Харсăррăн ярăн,
Самолет!

Вĕçет самолет пултаруллăн, хăюллăн,
Маттур пилотсем вĕçтерессĕ ăна,
Пин-пин çухрăм урлă, пăрсем-шывсем урлă
Пропеллер сасси янратать таврана.

Кăмăл—хаваслă,
Çул—пĕрре.
Вĕç, хурçă кайăк,
Вирлĕрех!

Мала та мала ярӑнать хурҫӑ кайӑк,
Чӑрмав чарас ҫук паттӑрсен ӗмӗтне.
Ялан ҫӗнтерет большевизм вӑй-халӗ,
Ҫӗнтертӗмӗр, ҫитрӗмӗр Полюс ҫине.

Эпӗр кӑтартнӑ
Вӑй-хала.
Пирӗн ҫулсемӗр
Малалла!

Эхер те тӑшман тапӑнма шутлассасӑн
Хаваслӑх хӗвелӗн ҫӗршывӗ ҫине,—
Маттур эскадрильясем пирӗн аркатӗҫ,
Тӗп тӑвӗҫ тӑшманӑн хура ушкӑнне!

Эпӗр калатпӑр
Тепӗр хут:
Харсӑррӑн ярӑн,
Самолет!

# МАЙ САВВИ

Тўпе сенкер çăлкуç пек тăрă.
Çўрет пирте—çурхи илем.
Хĕвел! Эс ярăн пĕлĕт тăрăх,
Çĕклен паян çўле, çўле.

Хĕвел патнех халь хамăр эпĕр
Çĕклетпĕр Майăн ялавне.
Паян пĕтĕм тĕнче итлетĕр,
Тăнлатăр ирĕк ĕç шавне.

Урам тулли утатпăр эпĕр,
Юрлатпăр лайăх юрăсем.
Çуркуннехи парка çил евĕр
Таçта çити каяç вĕсем.

Урам тулли утать хаваслăх,
Илемлĕ кĕвĕ çĕкленет:
Паян пирте ем-ешĕл, аслăн,
Пĕтĕм çĕршыв чечекленет.

Çĕршыв юрлатăр, хĕвел култăр,
Кашнийĕ тухнă урама.
Калатпăр эпĕр:—Сывă пултăр
Ялав çĕкленĕ ешĕл Май!

## СЫХЛĂХ ЮРРИ

Явăнасшăн пуç çинче
Чунилли çăханĕ.
Шухăшлать вăл пур енчен
Юн ĕçме тухам-и.

Советсенĕн çĕренче
Вилĕм çӳретесшĕн.
Ун çине вăл пур енчен
Вăрçăпа килесшĕн.

Явăнаймăн эс, çăхан,
Кăлăхах супатăн.
Е ытах та, хăтлансан,
Вилĕмна тупатăн.

Вăйлă эпĕр çĕр çинче,
Сывлăшра та вăйлă.
Тинĕссем те, вăл енчен,
Пирĕнех мухтавлă.

Эпĕр—аслă вăй-хăват,
Çĕнтерӳллĕ эпĕр.
Пирĕн аслă çĕршыва
Пусăм та кĕреймĕр.

Явăнасшăн пуç çинче
Чунилли çăханĕ.
Явăнаймĕ, çийĕнчех
Вилĕ персе анĕ!

# АМĂШĔ

Анат-касра, кĕтесре,
Сад пахчийĕн варринче
Шурă пӳрт ларать.
Сад пахчинчи çав пӳртре
Ывăл-хĕрсĕр, пĕр пĕччен,
Карчăк пурăнать.

Вăхăчĕ çитсен, пĕр пек,
Шурă-шурă чечекпе
Тумланать пахча.
Çакăн пек чух, пĕр ирпе
Карчăк хăйĕн ачипе
Уйрăлнă тахçан.

Пулнă вăхăт: ун чухне
Совет çĕрне пĕтерме
Килнĕ адмирал.
Карчăк хăйĕн ывăлне
Ăна хирĕç кĕрешме
Пилленĕ ăс-хал.

Йĕкĕт—хĕрлĕ партизан
Çапăçăвăн хирĕнче

Шеллемен юнне.
Шăп çулталăк çапăçсан
Çеçенхирĕн варринче
Хунă вăл пуçне.

Ватă карчăк кашни çул,
Чечеке ларсассăн сад,
Кĕтет ывăлне.
Анчах ывăл килес çук.
Килленеймĕ тек пăхса
Карчăк ун çине...

Анчах карчăк хурлă мар,
Вăл мăнаçлă, вăл хастар,
Вăл çапла пуплет:
Тепĕр хут килсен тăшман,
Çак кунçулшăн çапăçма,
Хам та кайăп, тет.

# ЧАПАЙ

Лӑпкӑ мар-çке Урал шывӗ,
Ахӑрать, йӗрет.
Урал шывӗ çийӗн харсӑр
Пулемет кӗрлет.

Хура хумлӑн, хӗрлӗ юнлӑн
Пӑтранать Урал.
Тӑшмансем çитсе çывхарчӗç,
Килчӗç хуп-хура.

Тӑшмана ялан çӗнтернӗ,
Çӗмӗрнӗ Чапай.
Сӑртсем урлӑ, хирсем урлӑ
Тухнӑ вӑл чаппа.

Казаксем-и çывхараççӗ,
Е килет Колчак,—
Чапая ялан та паллӑ
Çӗнтерў анчах.

Колчака вӑл хуса янӑ,
Ирӗкре Урал.
Анчах вилчӗ пирӗн паттӑр,
Путрӗ авӑра.

Çитӗнет Совет çӗршывӗ,
Çӗкленет пӗрмай.
Çӗн тӗнчешӗн пуçне хучӗ
Командир Чапай.

Хулара халь юрӑ, юрӑ,
Юрӑ—ялсенче.
Асӑнса юрлатпӑр эпӗр
Паттӑрсем çинчен.

## ÇAМРĂКЛĂХ САВВИ

Кашнă çул, уçсан сентябрь
Календарĕн листине,
Уявлатпăр чаплăн эпĕр
Чыслă яшлăх уявне.

Çĕршывра, сÿнми çăлкуçăн,
Яшлăх, çамрăклăх тапать.
Харсăр çамрăкпăх! Тап уççăн,
Эсĕ тивĕç мухтава.

Çеçен хир, сăрт-ту, шыв шурĕ,
Сывлăш, тинĕс, вăрмансем,—
Пур çĕртен те юрă, юрă
Эп илтетĕп савăнса.

Заводра та, уй-хирте те
Эп куратăп, эп илтеп,—
Пур çĕрте те, пур çĕрте те
Çамрăклăх вĕрет пирте.

Самолет çӳлтен иртет-и,
Трактор-и кĕрлет уйра,—
Пур çĕрте те, пур çĕрте те
Çав вăл—яшлăх, уйăрап.

Сĕрĕшсе пулать-и тулă,
Е садсем чечекленеç,—
Пур çĕрте те-çке хăюллăн
Çав вăл—яшлăх çĕкленет.

Хум-шавпа карап пырать-и,
Парашют-и карăнать,—
Пур çĕрте те-çке курап эп,
Яшлăх-çамрăклăх, сана.

Инçетри Амур синче-и
Куртăн çăлтăрлă шлема,—
Çавă—çамрăклăх тĕнчийĕ,
Çав вăл—яшлăх яланах.

Логарифмăпа-мĕнпе-и,
Е бином çинче ларас,—
Çав вăл—çамрăклăх телейĕ
Манăн тулăх çĕршывра.

Вĕренет, ӳсет, ĕçлет вăл,
Чыслă çамрăклăх, пирте.

Уншăн эп çыратăп сăвă,
Эпĕ уншăн хĕпĕртеп.

Пурнăç—тулăх. Çулĕ—такăр.
Аслă ĕмĕт пирĕнпе.
Çĕнтерӳллĕн утăмлатпăр
Ленин—Сталин çулĕпе.

Çĕн тĕнче тăван çĕршывшăн
Иксĕлми вăй-хал пулса
Çĕкленет, ӳсет ман йышăм
Паттăр, сывлăхлă, таса.

Кашнă çул, уçсан сентябрь
Календарĕн листине,
Уявлатпăр чаплăн эпĕр
Чыслă яшлăх уявне.

## ВИÇĔ ПАТТĂР

*„Родина" экипажне*

Ирĕ килчĕ калама çук капăр:
Пĕлĕт тăрă, яккăрах тавра.
Тухăça çул тытрĕç виçĕ паттăр
Яланах хĕвеллĕ Мускавран.

Виçĕ паттăр—виçĕ чаплă хĕр вăл,
Пирĕн халăхсенĕн хĕрĕсем.
Виçĕшĕн те пĕр тĕллев, пĕр кăмăл,—
Çĕнтермешкĕн тухрĕçĕ вĕсем.

Шанчăклă вĕсенĕн самолечĕ,
Лайăх алăра ĕçлет штурвал,
Аялта юлаç хулийĕ, сачĕ...
Аялта юлаç хир-хир, ял-ял...

Ту-сăрт çийĕн, аслă шывсем çийĕн,
Тайга çийĕн каçрĕç паттăрсем.
Çăмăр витĕр, вăйлă тăвăл витĕр
Кунĕн-çĕрĕн вĕçрĕçĕ вĕсем.

Паттăрсен тĕллевĕ пур-пĕр çирĕп,
Парăнмаççĕ паттăрсем нихçан.
Виçĕ паттăр, виçĕ совет хĕрĕ
Вĕçеве вĕçлерĕç пит аван.

Сĕм тайган илемлех мар кĕр кунĕ,—
Шурлăх, лачака, сивлек тĕтре...
Нихăçта та курăнмасть çын чунĕ,
Пĕр сас-чу та çук—хăть инçетре.

Вунă тавлăк ларнă хăйсен халлĕн
Паттăрсем çак чĕмсĕр тайгара.
Анчах пур-çке çăлăнăç, вăл—Сталин,
Вăл пурри кунта та кун парать.

Виçĕ паттăр—виçĕшĕ те сывă,
Йăвăрлăхран çăлчĕç вĕсене.
Саламлать паян Совет çĕршывĕ
Хăйĕн чаплă паттăрĕсене.

## АМĂШĔ ХĔРНЕ ĂСАТРĔ

Шурăмпуçĕ çĕкленсессĕн
Хĕрлĕ юн-тĕспе,
Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ
Ту-сăрт çулĕпе,

Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ
Вăрçă хирĕпе.

Икĕ ывăл пулнă унăн,
Пулнă... халĕ çук:
Вĕсем ӳкнĕ Альказаршăн
Харсăр вăрçнă чух,

Вĕсем пĕтнĕ—çĕн тĕнчешĕн,
Вилнĕ... халĕ çук...

Çулăмпа çунать Испани,
Çăвăнать юнпа.
Лăпланса ларма çук канăç,
Унашкал кун мар:

Çулăмпа çунать Испани,
Çăвăнать юнпа.

Çавăнпа та шуçăм витĕр,
Авă, ирхине
Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ
Çапăçу хирне,

Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ
Хĕрлисем патне.

# КĔПЕР

Пĕлетĕп аван: юррăн чапĕ-хисепĕ
Ялан вăй-хăватлăн, хăюллăн çиçет.
Кĕскен çеç сăнласшăн кунта халĕ эпĕ
Испанире пулнă пĕр пĕчĕк ĕçе.

Мăн шыв хумханать. Чўхенет вĕç-хĕррисĕр.
Ун урлă выртать асамат пек кĕпер.
Кĕпер çывăхне çывхарса çитнĕ ирсĕр
Тăшманăн роти аслă шыв хĕррипе.

Кĕпер варринче пĕтĕмпе те пĕр çын çеç.
Пĕр çын... Пулеметчик. Пĕр пуçăн. Пĕччен.
„Кĕпер—пĕтĕм шанчăк. Вăл çук—ĕмĕт сўнчĕ",
Çапла шухăшлать çавă çын ун çинче.

Вăл çын—комсомолец. Вунтăххăрти çамрăк.
Ответлă хурал шанса панă ăна.
„Е хамăр кĕпер юлать халĕ те хамăрăн,
Е—çуккă пулсан,—вилсе парăнам"...

Çук! Вилĕм çинчен асилмест комсомолец,
Илет вăл тăшман çине тĕрĕс прицел.
Ӳкет ав пĕри. Теприне лекет пуля.
Пĕри теприне ӳкереççĕ çитсе...

Йăванчĕç темчул... Анчах пурĕ те мар-çке,
Паллах, ротăра чĕррĕн юлнă нумай.
Вĕсем урса кайнăн, пырса тапăнаççĕ,
Илеç кĕпере, пуçлаç пăлханма.

Отряд вырăнне—кур... пĕр çын, пулеметчик:
(Отрячĕ кунта пулман та иккен!)
Часах йĕкĕте штык çине, ак, çĕклеççĕ,
Асап кăтартаççĕ пĕлми пуличчен...

Анчах хĕрлисенĕн пĕрре вăл девизĕ:
„Пуриншĕн—пĕриййĕ, пĕриншĕн—пурте“.
Часах пултаруллăн, пĕр шиклĕх тĕввисĕр,
Вĕсем сирпĕтрĕç тăшмана кĕпертен.

Куçне хупайман-ха герой-пулеметчик,
Алла, акă, илчĕç ăна тусĕсем.
„Юлаттăнччĕ сывă, калла чакмаллаччĕ“,—
Шеллеççĕ тусне юлашки хут вĕсем...

„Мĕнле-ха чакăм эп патронăм пĕтмесĕр",
Тесе кусне хупрĕ герой ерипе.
Мăн шыв хумханать. Чӳхенет вĕç-хĕррисĕр.
Ун урлă выртать асамат пек кĕпер.

# ТУПМАЛЛИ

Стр.
Умсăмах вырăнне . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Хĕвелĕмĕр Сталин . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Юрă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Шанчăклă хурал . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Летчиксен маршĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Май сăвви . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Сыхлăх юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Амăшĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17
Чапай . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Çамрăклăх сăвви . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Виçĕ паттăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
Кĕпер . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 28

## ИВАН ИВНИК КĔНЕКИСЕМ

1. *Павлик Морозов*. Поэма. Чăвашиздат, 1934.
2. *Çуркунне.* Сăвăсемпе поэмăсем. Чăвашиздат, 1937.
3. *Çĕнĕ сăвăсем.* Чăвашиздат, 1938.
4. *Телей çулĕ.* Сăвăлла юмах. Чăвашиздат, 1938.
5. *Ăшă çил*. Сăвăсем. Чăвашиздат, 1939.
6. *Лирика.* Сăвăсем. Чăвашиздат. (Пичетленет.)

Хакĕ 75 пус
Цена 75 коп.

*ИВАН ИВНИК*

# НАШЕ СЧАСТЬЕ

Стихи и песни

ДОМ НАРОДНОГО ТВОРЧЕСТВА
ЧЕБОКСАРЫ ◆ 1939